24-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942
ЯНВАРЬ
7
ЮНКУН
5(6030) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

Хĕрлĕ Çарăн высший начальство составне çар званийĕсем парасси çинчен

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă ПОСТАНОВЛЕНИ

Хĕрлĕ Çарăн высший начальство составĕнчи çак çынсене СССР Верховный Совет Президиумĕн 1940 çулти майăн 7-мĕшĕнчи Указĕ тăрăх тунă çар званийĕсене парас:

ГЕНЕРАЛ-ЛЕЙТЕНАНТ ЗВАНИНЕ

1. Павел Алексеевич **Белова.**
2. Дмитрий Васильевич **Лелюшенкона.**

ÇЫХĂНУ ВОЙСКИСЕН ГЕНЕРАЛ-ЛЕЙТЕНАНЧĔН ЗВАНИНЕ

1. Иван Тимофеевич **Кириченкона.**
2. Иосиф Нестерович **Ковалева.**

ГЕНЕРАЛ-МАЙОР ЗВАНИНЕ

1. Николай Емельянович **Аргунова.**
2. Иван Семенович **Варенникова.**
3. Владимир Сергеевич **Голушкевича.**
4. Емельян Сергеевич **Лагуткина**
5. Степан Иванович **Любарские.**
6. Николай Сергеевич **Осликовские.**
7. Иван Павлович **Пичугина.**
8. Михаил Александрович **Сиязова.**
9. Кузьма Петрович **Трубникова.**
10. Павел Андреевич **Фирсова.**

АРТИЛЛЕРИ ГЕНЕРАЛ-МАЙОРĔН ЗВАНИНЕ

1. Константин Николаевич **Леселидзене.**
2. Григорий Давыдович **Пласкова.**

ÇЫХĂНУ ВОЙСКИСЕН ГЕНЕРАЛ-МАЙОРĔН ЗВАНИНЕ

1. Георгий Михайлович **Брагина.**

ИНТЕНДАНТСКИ СЛУЖБĂН ГЕНЕРАЛ-МАЙОРĔН ЗВАНИНЕ

1. Николай Александрович **Антипенкона.**
2. Константин Вениаминович **Суркова.**

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ И. СТАЛИН.

СССР Совнаркомĕн Ĕçĕсен Управляющийĕ Я. ЧАДАЕВ.

Мускав, Кремль.
1942 çулти январĕн 2-мĕш.

ЙĔЛТĔРÇĔСЕН КРОСĔ УМĔН

Профсоюз членĕсемпе комсомолецсен Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă ятпа пулакан традициллĕ кросне irттерме хатĕрленес ĕç республикăра анлăн сарăлса пырать.

Кроса хатĕрленсе irттерес тĕлĕшпе кашни районрах оргкомитетсем ĕçлеççĕ. Калинино районĕнче оргкомитет 7 çынран тунă. Оргкомитет хатĕрленӳ ĕçне хĕрӳллĕн тытăннă. Кросс пулмалли вырăнсене уйăрса хунă. Судьясен коллегине те туса çирĕплетнĕ. Кроса тĕплĕн хатĕрленсе йĕркеллĕн irттерес тĕлĕшпе ятарласа 18 çынна вĕрентсе кăларнă. Халĕ вĕсем йĕлтĕрпе çӳреме вĕрентекен общественнăй инструкторсем пулса ĕçлеççĕ. Кросра пулакан çынсене отделенисене, взводсене пайласа тухаççĕ, вĕсен командирĕсене палăртса оргкомитета çирĕплетме тăратаççĕ. Йĕлтĕрпе çӳрес тĕлĕшпе тренировкăсем пулса irтеççĕ. Ку ĕç шкулти комсомол тата профсоюз организацисенче аван тăрать. Калининăри вăтам шкулта тата педучилищĕре, Ассакассинчи туллимар вăтам шкулта вĕренекенсем йĕлтĕрлĕ походсем, ăмăртусем туса irттернĕ. ... вăхăтра вĕсем ГТО значокĕн хĕлхи нормисене парас ĕçе те йĕркелерĕç. Районри оргкомитет кашни çамрăк профсоюз членне кроса хутшăнтарассишĕн кĕрешет. Пурне те йĕлтĕр ... парас тĕлĕшпе ĕçлет. Юлашки ... районĕпе çамрăксем килте ... мăшăр йĕлтĕр тунă. Йĕлтĕр çук организацисене урăх ялсенчен илсе ... панă.

Сĕнтĕр районĕнче кроса 5 вырăнта irттерме йышăннă. Вĕсен çумне судьясен коллегине çирĕплетнĕ. Оргкомитет профсоюз организацийĕсен руководителĕсемпе комсомол пуçламĕш организацийĕсен секретарĕсене пухса, кроса хатĕрленсе irттерес ыйтăва сӳтсе-явнă. Нумай çĕрте халь тренировкăсем пулса irтеççĕ. Ку ĕç уйрăмăнах шкулсенче аван пырать. Сĕнтĕрти вăтам, Шомиковăри туллимар вăтам шкулсенче вĕренекенсем 3 хутчен йĕлтĕрлĕ ăмăртусем тунă.

Чкаловски районра кроса 4 вырăнта irттерме палăртнă. Судьясен комиссийĕсене тупса çирĕплетнĕ. Туллимар даннăйсем тăрăх, районĕпе 42 отделени, кашнинче 10-шар çын кроса хутшăнма хатĕрленеççĕ. Çамрăксен вăйĕпе килте 57 мăшăр йĕлтĕр тунă. Патăръелĕнчи педучилищĕре, Чкаловскинчи вăтам шкулта вĕренекенсем ăмăртусем туса irттернĕ.

Çĕрпӳ районĕнче кроса хутшăнма 173 çынран 17 отделени йĕркеленĕ. Кроса 6 вырăнта тума палăртнă.

Хĕрлĕ Чутай районĕнче кроса хатĕрленес тĕлĕшпе ăмăртусем пулса irтнĕ. Унта 230 комсомолец тата союзра тăман 130 çамрăк хутшăннă.

Кроса хатĕрленес тĕлĕшпе хăшпĕр ĕçсене тунă пулин те, комсомол тата профсоюз организацийĕсенче тумалли ĕçсем нумай-ха. Хăшпĕр çĕрте оргкомитетсем ĕçе кирлĕ пек тытăнайман. Советски районра кроса хутшăнмалли юлташсене подразделенисене уйăрас, медицина енĕпе пăхса тухас, массăллă тренировкăсем irттерес ĕçе пуçăнман. Райцентрти комсомолецсен çеç йĕлтĕрсем çителĕклĕ. Колхозсенчи хăшпĕр организацисенче йĕлтĕрсем çукпа пĕрех. Халь тин йĕлтĕрсем тăвас ĕçе пуçăнма шутлаççĕ.

Кроса хатĕрленес тĕлĕшпе Шупашкар хулинче те ĕç начар тăрать. Подразделенисене туса çитермен. Участниксене медицина енĕпе пăхса тухассине лайăх йĕркелемен. Тренировкăсем те сахал пулаççĕ. Йĕлтĕр базинчи йĕлтĕрсемпе туллин усă курмаççĕ.

Йĕлтĕрçĕсен кросĕ пуçланаччен вăхăт нумаях юлмасть. Кроса хатĕрленес ĕçе хăвăртлатмалла. Оргкомитетсен ку ĕçпе оперативнăрах ертсе пымалла. Кросра пулмалли çынсене январĕн 10-мĕш тĕлне подразделенисене — отделенисене, взводсене, ротăсене уйăрса çитермелле. Хĕрарăмсен, арçынсен, çамрăксен уйрăм подразделенийĕсем пулччăр. Подразделенисен командирĕсене тупса çирĕплетмелле. Кросс irтекен кашни вырăнта судьясен коллегийĕ пулмалла.

Кроса лайăх irттересси малтан мĕнле хатĕрленнинчен килет. Çавăнпа та тренировкăсем, массăллă ăмăртусем тăвассине пысăк вырăна хумалла. Тренировкăсене тĕрлĕ чăрмавсемлĕ вырăнсенче туса irттерсен лайăхрах.

Паллах, тренировкăсене тата кроса irттерме йĕлтĕрсем кирлĕ. Çавăнпа пĕр куна та сая ямасăр йĕлтĕр хатĕрлес ĕçе çине тăрса организацилемелле. Кашни районрах, ялтах, кашни çамрăкăн килĕнчех йĕлтĕр тăвассине йĕркелемелле. Промысла кооперацийĕсен умĕнче те йĕлтĕрсем ытларах туса кăларас задача тăрать.

Профсоюзпа комсомол организацийĕсем, оргкомитетсем кросра пулмалли çынсене медицина енĕпе тĕрĕслес ĕçе йĕркелемелле. Кросс пынă вăхăтра та медицина пулăшăвĕ пулмалла.

Оргкомитетсем кроса хатĕрленсе irттерес тĕлĕшпе ответлă пулса тăраççĕ, профсоюзпа комсомол организацисем вĕсене пулăшма тивĕçлĕ. Халĕ кросс ăçта, мĕнле пулса irтесси çинчен ĕççыннисем хушшинче анлантару ĕçне анлăн сарса ямалла. Кроса хатĕрленес тĕлĕшпе, ытти ĕçри пекех, социализмлă ăмăрту пысăк вырăн йышăнса тăрать. Çавăнпа районпа район, организаципе организаци тата уйрăм çынсем хушшинчи ăмăртăва йĕркелемелле.

Профсоюз членĕсемпе комсомолецсен Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă ятпа пулса irтекен кросне хатĕрленсе irттерес тĕлĕшпе пирĕн республика Мари АССР-не ăмăртăва чĕннĕ. Договорта каланă тăрăх, республикăри комсомолецсене, профсоюз членĕсене, всевобучăн подразделенийĕсенчи боецсене 100 процентпĕпех кроса хутшăнтармалла. Вĕсенчен 90 процентĕнчен кая мар ГТО значокĕн нормисене памалла.

Çакна асра тытса, ăмăртура мала тухассишĕн кĕрешер!

Совет Информаци Бюровĕнчен

Январĕн 5-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Январĕн 5-мĕшĕнче фронтăн чылай участокĕсенче пирĕн войскăсем противника хирĕç вăйлăн çапăçнă, малалла куçса пырса халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. Нимĕçсен войскисем чĕрĕ вăйпа техника тĕлĕшĕнчен питех те пысăк сухатусем тӳсеççĕ.

Январĕн 4-мĕшĕнче нимĕçсенне 41 самолет пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 11 самолет пĕтнĕ.

* * *

Январĕн 4-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем нимĕçсен 13 танкне, 4 бронемашинине, пехотăпа грузсем турттарса пыракан 790 ытла автомашинине, 8 орудине прислугисемпе пĕрлех, боеприпассем тиенĕ 350 лавне яхăн, горючи турттарса пыракан 7 автоцистернине пĕтерсе тăкнă, çар складне взрыв туса сирпĕнтернĕ, чугунçул çинчи 43 вагона аркатса тăкнă, 8 чугунçул эшелонне вут тивретсе янă, противник пехотин 3 полкне ытла сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн часть пĕр кун хушши çапăçса противника халăх пурăнакан 13 пунктран хăваласа кăларнă, çакăнта нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсем çĕршер çын вилнĕ тата аманнă. Фронтăн тепĕр участокĕнче пирĕн боецсем нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 600 çынна пĕтерсе тăкнă тата 3 йывăр оруди, пĕр пулемет, 3 автомашина, пĕр тягач, 4 мотоцикл тытса илнĕ.

* * *

Пирĕн подразделени хăюллăн пырса тапăнса, нимĕç войскисен аллинчи пĕр чугунçул разъездне йышăнса илнĕ. Боецсем чугунçула аркатса тăкнă, çапла майпа питех те кирлĕ икĕ пункт хушшинчи çыхăнăва татнă. 20 нимĕçе тыткăна илнĕ.

* * *

Севастополь оборонин секторĕсенчен пĕринче атакăлама хăтланакан нимĕçсен полкне Гусони капитанăн боецĕсем çапса çĕмĕрнĕ. Çапăçу хирĕнче тăшман хăйĕн салтакĕсемпе офицерĕсен 600 виллине пăрахса хăварнă. Пирĕн боецсем нимĕçсенне 18 пулемет, темиçе пин минăсемпе снарядсем, 300 ытла винтовка тата ытти тĕрлĕ трофейăсем тытса илнĕ.

* * *

Рота командирĕ Денисенко юлташ çапăçу вăхăтĕнче танкпала противник вырнаçса тăнă çĕре çĕмĕрсе кĕнĕ, 7 землянка çине гранатăсем ывăтса, вăл нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 60 çынна çити пĕтерсе тăкнă.

* * *

Белоруссин нимĕçсем оккупациленĕ районĕсенчен пĕринче кĕрешекен Х. юлташăн партизанла отрячĕн ĕçĕсем çинчен хыпар илнĕ. Нимĕç оккупанчĕсене хирĕç 3 уйăх хушши кĕрешсе, мухтавлă совет партизанĕсем нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 283 çынна вĕлерсе пĕтернĕ тата нимĕçсен 3 орудине прислугисемпе пĕрле, 36 автомашинине, 13 мотоциклне пĕтерсе тăкнă, нимĕçсен пĕр самолетне тата тепĕр транспортнăй планерне çунтарса янă. Фашистсен 120 салтакпа офицертан тăракан карательнăй отрядне хирĕç партизансем хăюллăн çапăçăва кĕнĕ, Фашистсен отрядне çапса аркатнă та унăн юлашкийĕсем тарса пĕтнĕ. Противникăн çакăнта темиçе вуншар салтак пĕтнĕ. Партизансен отрячĕ гитлеровецсен коммуникацийĕсемпе çыхăну линийĕсем çине татти-сыпписĕр пыра-пыра çапать. Партизансем тăшманăн 4 çар эшелонне ӳпĕнтерсе янă, чугунçул çинчи пĕр кĕпере тата шоссе çулĕ çинчи 4 кĕпере взрыв туса аркатнă, чылай вырăнсенче чугунçула пăсса сиенленĕ тата çыхăну линине татнă.

* * *

Нимĕçсен 209-мĕш пехотнăй полкĕнчи 11-мĕш ротăран тыткăна лекнĕ Ганс Гаан салтак çапла каласа панă: «Пирĕн ротăра пĕтĕмпе 260 çын пулнă. Пире 4 хутчен çĕнĕрен çынсем — 100 çынна яхăн хушса панă. Юлашки çапăçусенче эпир питех те пысăк сухатусем тӳсрĕмĕр. Халĕ ротăра пĕтĕмпе те 90 çын кăна шутланать. Тӳсме çук сивĕ. Пирĕн ротăри 11 салтакăнне урисене тăм илсе ячĕ. Темиçе салтак шăнса вилсе пуçĕпех пĕтрĕ. Полкра дисциплина сисĕнмеллех чакрĕ. Çак кунсенче 11-мĕш ротăри офицер 4 салтака командăй пункт тунă çĕрте ĕçлеме хушрĕ, салтаксем çак распоряжение пурнăçлассинчен пачах пăрăнчĕç. Салтаксем нумайĕшĕсем хăйсен ирĕкĕпех постран пăраха-пăраха каяççĕ.

Нимĕç ефрейторĕ Иоганн Шмидт суммĕнче унăн паллана хĕрарăмĕ Фишер Гросенхагентан çырнă çырăва тупнă. Çырура çапла каланă: «Ĕнер нумайĕшĕсене медицина енĕпе тĕрĕслесе тухрĕç. Чирлисене пурне те тата хăрах аллăллă чăлахсене те çар службине юрăхлă тесе йышăнчĕç».

* * *

Мускав облаçĕнчи халĕ нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă Белоусово ялĕнче пурăнакан çынсем фашистла вăрă-хурахсен тискер ĕçĕсемпе çаратăвĕсем çинчен акт çырнă. Белоусово ялĕнчи хресченсенчен нимĕçсем мĕнпур тырпула, çĕрулмине, килти япалисемпе кĕпе-тумтирсене туртса илнĕ, тесе кăтартса панă çав актра. Вăрă-хурахсем çынсене тӳрех, урамрах çарамаслантарнă. Оккупантсем хăйсем чакнă чухне хăйсемпе пĕрле илсе кайма пултарайман япаласене çунтарса янă. Фашистсем «Труд» фабрикăра ĕçлекен Ф. Е. Берсенев счетовода, Ф. Р. Иванов рабочие вĕлернĕ. Гитлеровецсем ватă çынсенчен, хĕрарăмсемпе пĕчĕк ачасенчен мăшкăлланă, вĕсене пур майсемпе те тискеррĕн асаплантарнă. Çав акт айне ялти çынсем: Шахов, Кокорев, Романова, Зеленова тата Зеленов алă пуснă.

* * *

Нимĕç войскисен Хĕвелтухăç фронтĕнчи ĕçĕсем ăнăçсăр пулнине Германи халăхĕнчен пытарса хăварас тесе гитлерла суеçĕсем пĕтĕм вăйне хурса тăрăшаççĕ. Çав шутпа Берлинри радио фашистла авиаци ăнăçлă ĕçсем тăвать тесе калакан пӳрнерен ĕмсе кăларнă хыпарсене куллен-кун парса тăрать. Çапла, январĕн 4-мĕшĕнче нимĕçсем: «Кĕçĕр çĕрле Германи авиацийĕ Мускав çине ăнăçлăн вĕçсе пырса тапăннă» тесе, «вокзалсем çине тата ытти çар объекчĕсем çине бомбăсем тĕл лекнине палăртнă» тесе пĕлтерне. Тĕрĕссипе илсен, çав ситĕнӳсене нимĕç авиацийĕ мар, фашистла суеçĕсем тунă, вĕсем, чернилпа тата хутпа усă курса, часчасах çавăн пек «вĕçсе пырса тапăнаççĕ». Мускав çине вĕçсе пырса тапăнни çинчен каласан, пуриншĕн те çакă паллă: нимĕçсен уйрăм самолечĕсем Мускав патнелле пырса кĕме хăтланни пачах та ăнăçсăр пулнă. Çавăнпа та ĕнтĕ вокзалсем те, Мускав хулинчи ытти çар объекчĕсем те сиен курман тата сиен курма та пултарайман.

Январĕн 6-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Январĕн 5-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем пур участоксенче те противника хирĕç çапăçнă.

* * *

Пирĕн часть (Хĕвеланăç фрончĕ) пĕр кун хушши çапăçса тăшманăнне 42 грузовик, 7 çăмăл автомашина, 3 тягач, 7 походнăй кухня, 4 мотоцикл, 20 ещĕк снеряд тытса илнĕ. Тепĕр участокра пирĕн подразделени, каялла чакакан тăшмана хăваласа пырса, нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене 40 çынна пĕтерсе тăкнă, 3 оруди, 10 пулемет, 2 автомашина тата 2 радиостанци тытса илнĕ.

* * *

Кăнтăр фронтĕнче кĕрешекен пирĕн пĕр чаçри артиллеристсем, тăшмана хирĕç пĕр кун хушши çапăçса, тăшманăн 2 батальонне аркатса тăкнă, йывăçпа тăпраран çирĕплетсе тунă пĕр огневой точкăна пусарса лартнă, нимĕç артиллерийĕн батарейине пĕтерсе тăкнă тата тăшман пехотине икĕ взвода яхăн сапаласа янă.

* * *

Пирĕн летчиксем, Ленинград фронтĕнче çапăçаканскерсем, тăшманăн чугунçул çинчи çар эшелонĕ çине ăнăçлăн пырса тапăнса, пехотăпа çар хатĕрĕсем турттарса пыракан 36 вагона пĕтерсе тăкнă.

* * *

Совет разведчикĕсен подразделенийĕ Алферьево ятлă ялта тăракан нимĕç отрячĕ çине кĕтмен çĕртен пырса тапăнса, 250 фашиста вĕлерсе пĕтернĕ. Ялтан тухса тарнă чухне нимĕçсем хăйсен хĕçпăшалĕсемпе çар пурлăхне пăрахсах хăварнă. Взвод командирĕ Никитин юлташ виçĕ красноармеецразведчикпа пĕрле çак яла пуриччен малтан çĕмĕрсе кĕрсе кайнă та, автоматсенчен персе, 13 нимĕçе пĕтерсе тăкнă. Вилнисенчен иккĕшĕ офицерсем пулнă.

* * *

Ленинград облаçĕн нимĕçсем вăхăтлăха тытса илнĕ районĕсенче П. юлташ командир пулса ертсе пынипе кĕрешекен партизансен отрячĕ хăй çапăçма тытăннăранпа нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене 1483 çынна вĕлерсе пĕтернĕ, 58 автомашина, горючи тултарнă 4 цистерна, 3 танк, 3 бронемашина, 28 мотоцикл, 120 пичке горючи пĕтерсе тăкнă, нимĕçсен пĕр эшелонне тӳнтерсе янă. Отряд танксене хирĕç пемелли пăшалсем тăватă, 350 винтовка, 7 автомашина тата ытти çар пурлăхĕ те нумай тытса илнĕ. Шăнса вилнĕ нимĕç салтакĕ Иозеф Ганс çумĕнче тупнă çырăвăн пĕр сыпăкне илсе пичетлетпĕр (вăл çырăва Ганс хăйĕн тăванĕсем патне çырнă пулнă): «Пĕлместĕп, çитейĕç-ши сирĕн патăра çак çăмахсем? Эпир халĕ каялла чакма тытăнтăмăр. Пĕлетĕр-и эсир, мĕне пĕлтерет вăл «вырăс хĕлĕн шартлама сиввинче каялла чакатпăр» тени? Наполеон ăна пĕлнĕ. Эпир 35 градуслă сивĕре чакатпăр. Йĕри-таврах юрсем, çил-тăман. Халĕ мана çавтери йывăр, чĕре ыратать. Çил хаярран шăхăрать, ал-урана тăм илчĕ. Эпĕ урăх пултараймастăп»...

* * *

Туркменири ĕççыннисем оборона фондне 11 миллион та 371 пин тенкĕ укçа, 51 миллион та 267 пин тенкĕлĕх государство заемĕсен облигацийĕсене хывнă. Ашхабад районĕнчи «Красный Октябрь» ялхуçалăх артелĕн членĕ Мамаева Нур Набат оборона фондне 1.400 грамм кĕмĕл, Геок-Тепински районри Киров ячĕпе тăракан ялхуçалăх артелĕнчи колхозница Огуль Сапор Дурдыева—ылттăн сехет тата 760 грамм кĕмĕл япаласем хывнă. Туркменири ĕççыннисем оборона фондне пĕтĕмпе 5 тонна кĕмĕл панă. Кунсăр пуçне республикăри колхозниксемпе колхозницăсем оборона фондне шултра тата вактĕвек выльăхсем 15 пин пуç панă. Тасха-Базар районĕнчи «20 лет Октября» колхоз хăй кăна оборона фондне сурăхсемпе качакасем 800 пуç панă.

Оборона Халăх Комиссариатĕнче

18 МĔШ, 258-МĔШ СТРЕЛКОВĂЙ ДИВИЗИСЕНЧЕН, КАВАЛЕРИН 31-МĔШ ДИВИЗИЙĔНЧЕН, 29-МĔШ, 71-МĔШ СТРЕЛКОВĂЙ БРИГАДĂСЕНЧЕН ТАТА 9-МĔШ ТАНКОВĂЙ БРИГАДĂРАН ГВАРДЕЙСКИ ЧАÇСЕМ ТĂВАССИ ÇИНЧЕН

Пирĕн совет çĕршывĕшĕн, фашистла захватчиксене хирĕç пыракан нумай çапăçусенче 18-мĕш, 258-мĕш стрелковăй дивизисем, кавалерин 31-мĕш дивизийĕ, 29-мĕш, 71-мĕш стрелковăй бригадăсем тата 9-мĕш танковăй бригада хăюллă та паттăр пулнине, дисциплинăллă тата организованно пулнине кăтартрĕç. Нимĕç захватчикĕсене хирĕç татти-сыпписĕр çапăçса, вĕсем фашистсен войскисене пысăк сухатусем кӳчĕç, нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене вуншар пин çынна вĕлерсе пĕтерсе, трофейăсем питех те нумай тытса илчĕç.

Тăван çĕршывшăн, нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан çапăçусенче çирĕплĕхпе паттăрлăх кăтартнăшăн, дисциплинăллă та организованно пулнăшăн, çав соединенисен личнăй составĕ çапăçура геройлăх кăтартнăшăн çӳлте асăннă дивизисемпе бригадăсенчен гвардейски чаçсем тунă. Уйрăмăн илсен:

1) 18-мĕш стрелковăй дивизирен 11-мĕш гвардейски стрелковăй дивизи — дивизи командирĕ полковник **П. Н. ЧЕРНЫШОВ.**

2) 258-мĕш стрелковăй дивизирен—12-мĕш гвардейски стрелковăй дивизи—дивизи командирĕ генерал-майор **М. А. СИЯЗОВ.**

3) Кавалерин 31-мĕш дивизийĕнчен—кавалерин 7-мĕш гвардейски дивизийĕ—дивизи командирĕ полковник **М. Д. БОРИСОВ.**

4) 29-мĕш стрелковăй бригадăран—1-мĕш гвардейски стрелковăй бригада—бригада командирĕ полковник **М. Е. ЕРОХИН.**

5) 71-мĕш стрелковăй бригадăран—2-мĕш гвардейски стрелковăй бригада—бригада командирĕ полковник **Я. П. БЕЗВЕРХОВ.**

6) 9-мĕш танковăй бригадăран—2-мĕш гвардейски танковăй бригада—бригада командирĕ полковник **И. С. КИРИЧЕНКО.**

Асăннă дивизисемпе бригадăсене гварди ялавĕсем параççĕ.

Нимĕç генералĕсем „вырăссене мĕнле тыткăна илеççĕ"

Гитлер çарĕн командованийĕ, суйса картран вĕçерĕннĕскер, хăйĕн «специальнăй» тата «чрезвычайнăй» пĕлтерĕвĕсенче нимĕçсем тыткăна илнĕ красноармеецсен хисепĕ çинчен темĕнле фантазиллĕ сведенисем те пичетлесе кăларать. Совет Информаци Бюровĕ хăй вăхăтĕнче гитлеровецсем мĕн-мĕн хăтланнисене, вĕсен суя «шут» техникине тăрă шыв çине кăларчĕ. Гитлеровецсем хăйсем йышăнса илнĕ хуласемпе ялсенчи мĕнпур çитĕннĕ çынсене вăйпах тыла хăваласа каяççĕ е тĕрлĕ йывăр ĕçсем тума мобилизацилеççĕ. Вара çапла майпа пухнă мĕнпур мирлĕ халăха тыткăна лекнĕ çар çыннисем вырăнне хураççĕ.

Хальхи вăхăтра Совет Информаци Бюровĕн аллинче нимĕçсен фашистла войскисем вăрçă вăрçмалли пĕтĕм тĕнчери правилăсене кĕретĕнех пăсни çинчен, гитлеровецсем хăйсем тытса илнĕ халăх пурăнакан пунктсенчи мирлĕ халăха тискеррĕн асаплантарни çинчен тата мирлĕ халăха тыткăна лекнĕ çар çыннисен хисепне кĕртни çинчен калакан çĕнĕ, никам сирсе ярайми фактсем пур.

Ефремов хулинче нимĕçсен 18-мĕш танковăй дивизин 101-мĕш мотомехполкне 1941 çулти декабрĕн 12-мĕшĕнче панă 324/12-мĕш №-лĕ приказа пирĕн чаçсем тытса илнĕ. Эпир çав бандитла приказăн текстне пичетлетпĕр:

«Ĕлĕкхи позицисем патĕнче те, çĕнĕ позицисем умĕнче те халăх пурăнакан пунктсене пĕтĕмпех аркатса тăкмалла. Çакна тума васкасах хатĕрленмелле. Çак ĕçсенчи кирек епле çемçелĕхшĕн те пирĕн юнпа тӳлеме лекет. Çавăнпа та ку ĕçсене пĕр хĕрхенӳсĕр туса пымалла. Граждăнла халăхсене ку таранччен пекех çирĕп тытмалла. **Пăшал тытма пултаракан пур арçынсене те тытмалла та тыткăна лекнĕ çар çыннисене пухмалли сборнăй пунктсене ăсатмалла.** Хĕрарăмсемпе ачапăчасене малти линисенчи опорнăй пунктсенчен хĕвеланăç еннерех куçармалла, иккĕмĕш линири опорнăй пунктсенчен, чаçсем палăртнă тăрăх, пĕр вырăна хăваласа пухмалла. Противник пирĕн тыла граждăнла халăх пек тумланнă разведчиксене çуран е çунапа яма тăрăшать. **Дивизи участокне çуран, çунапа е йĕлтĕрпе килсе тухакан пур арçынсемпе хĕрарăмсем çине те нимĕн асăрхаттармасăрах пеме тытăнмалла.** Выльăх-чĕрлĕхпе апатçимĕçе пĕрле илсе каймалла. Выльăх-чĕрлĕхе чĕррĕн илсе кайма май килмесен, е ăна питĕ инçене илсе каймалла пулсан, выльăха пусмалла та какайне пĕрле илсе каймалла».

Нимĕç командованин çак официальнăй документĕ Гитлер çарĕ преступниксен тата хальхи вăхăтри техникăпа хĕçпăшалланнă бандитсемпе çын вĕлеренсен йыткĕтĕвĕ пулнине кĕтĕм тĕнче умĕнче татах та тепĕр хут кăтартса парать. Çак вăрă-хурахла çар пирĕн Хĕрлĕ Çара хирĕç кăна мар, тата мĕнпур халăха хирĕç, çитĕнсе çитнĕ çынсемпе ача-пăчасене, старик-семпе хĕрарăмсене хирĕç те çапăçать. Вĕсене пурне те каторгăри пек йывăр ĕç ĕçлеттереççĕ, пурне те тыткăна лекнĕ çар çынни вырăнне хураççĕ.

Совет çыннисем фашистла тискер кайăксен çак приказне çирĕп асра тытĕç. Пĕтĕм тĕнчери правăсене пăснăшăн, совет çыннисене пĕтерсе пынăшăн, совет хулисемпе ялĕсенчи мирлĕ халăхран мăшкăлласа пусмăрланăшăн нимĕçсем тивĕçлинчен виçĕ хут ытларах тӳлĕç.

СОВИНФОРМБЮРО.

Вăрман хатĕрлес ĕçе вăйлатмалла

ÇĔРПӲ. (**Хамăр корр.**). СССР Совнаркомĕ вăрман хатĕрлевĕнче ирттерекен тӳлевлĕ повинность тăрăх вăрман хатĕрлевне 53 колхоз хутшăнмалла. Тӳлевлĕ повинность пуçланни уйăх иртрĕ. Апла пулин те вăрман хатĕрлевне 34 колхоз çеç хутшăннă-ха. «Богатырь», «13 лет Октября», «Елаш», «Октябрь», Киров ячĕпе тăракан колхозсем вăрман хатĕрлевне хутшăнман. Вăрман хатĕрлевне хутшăннă колхозсем те хăйсен заданийĕсене вăхăтра тултарма тăрăшмаççĕ. Ĕç вăйĕ çителĕклĕ парса тăмаççĕ. Вăрманта ĕçлекен колхозниксем те ĕç тухăçлăхне ӳстерсе пымаççĕ. «Самолет», «Вулкан», «Красный флот», «Красный Путиловец», «Новая жизнь» колхозсенчен килнĕ колхозниксем уйăх хушшинче пĕтĕмпе те 2—2,5-шар кубометр çеç касса турттарнă. Çав хушăрах вăрман хатĕрлес ĕçре малта пыракан колхозсем те сахал мар. «Вучар» колхоз 23 кубометр йывăç касса хатĕрленĕ, 20 кубометр турттарнă.

Халĕ районра çавнашкал лайăх ĕçлекен колхозсем вăрман хатĕрлев планне апрелĕн 1-мĕш тĕлне пĕтĕмпех тултарассишĕн кĕрешеççĕ. Ытти колхозсен те вĕсенчен примерилсе вăрман хатĕрлев ĕçне вăйлатмалла.

Отечественнăй аслă вăрçă фрончĕсенче

Боровск патĕнчи çапăçусем

ХĔВЕЛАНĂÇ ФРОНЧĔ, январĕн 4-мĕш. (ТАСС спецкорĕ). Совет Информаци Бюровĕ пирĕн войскăсем Боровск хулине йышăнса илни çинчен пĕлтерчĕ. Боровичи патĕнче пулса иртнĕ хăшпĕр çапăçусем çинчен каласа парăпăр.

Хула çывăхĕнче икĕ кун хушши хаяр çапăçусем пулса пычĕç. Январĕн 2-мĕшĕнчи çапăçу уйрăмах хаяр пулчĕ. Тăшман çавтери хаяррăн хирĕç тăчĕ. Вара пирĕн войскăсем, питĕ ăста маневрсем туса, хулана пур енчен те çавăрса илчĕç. Нимĕçсем, блокада ункинчен çĕлăнса тухма хăтланса, боеприпассем турттарса пымалли тата эвакуацилемелли çулсене хăйсен аллинче тытса тăрас тесе темĕн териех тăрăшрĕç. Çак ĕç ăнăçлă пултăр тесе, вĕсем хăйсен автоматчикĕсен группине çулсем патне тăратса тухрĕç. Пирĕн чаçсен боевой йĕркисем тĕлĕнче, совет воинĕсен наступленири хавхаланăвне тытса чарас тесе, тăшманăн самолечĕсем темиçе хутчен те ушкăнĕушкăнĕпе те, пĕрерĕн-пĕрерĕн те вĕçсе çÿрерĕç.

Хулана çавăрса илсен, пирĕн войскăсем противник хирĕç тăнине сирсе пăрахрĕç те хулан кăнтăр-хĕвелтухăç тата кăнтăр-хĕвеланăç хĕррисене çĕмĕрсе кĕчĕç, унтан хулан хĕвелтухăçĕнчипе хĕвеланăçĕнчи пайĕсене йышăнса илчĕç. Каç пулнă тĕле хула варринче те урамсенчи хаяр çапăçусем пуçланса кайрĕç. Тăшман чул çуртсемпе подвалсенче çирĕпленсе ларнă. Кашни картишне, кашни урама çапăçусемпе илсе пыма тиврĕ.

Боровскри çапăçу темиçе сехете пычĕ те пирĕн çĕнтерÿпе вĕçленчĕ. Хула урамĕсенче нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсен виллисем, автомашинисем, хĕçпăшалĕсем, мотоциклĕсем йăваланса выртаççĕ.

Боровскра пур çĕрте те нимĕç оккупанчĕсем хуçаланнин йĕрĕсем палăраççĕ, фашистсем асаплантарса вĕлернĕ совет гражданĕсен виллисене курма пулать. Боровскран тухса тарнă чухне, нимĕçсем хăйсен ирсĕр преступленийĕсен йĕрĕсене пĕтерсе тăкма шутласа пулас, хулана вут тивертсе хăварнă. Совет войскисем килсе кĕни çеç хулана пĕтĕмпех пĕтерсе тăкассинчен çăлса хăварнă.

Боровск çывăхĕнче пулса иртнĕ çапăçусенче нумай красноармеецсемпе командирсем тата политработниксем хăйсен хăюлăхĕпе паттăрлăхне кăтартса панă. Степановпа Богданов красноармеецсене командăй пункта почта леçсе пама хушнă. Çул çинче вĕсем çине автоматчиксем питĕ вăйлăн пеме пуçланă. Хĕрлĕ Çарăн чаплă боецĕсем пульăсем тивекен вырăнтан тухнă та, часах пирĕн боецсен пĕчĕк группине ертсе, çак вырăн патне каялла таврăннă. Вĕсем нимĕç автоматчикĕсем патне вăрттăн пынă та, гранатăсем ывăтса, фашистсене ĕмĕрлĕхех путлантарса лартнă. Çапăçу хирĕнче 8 фашистăн вилли выртса юлнă. Степановпа Богданов ручной пулемет, 8 автомат тата ытти тĕрлĕ хĕçпăшалсем те тытса илнĕ.

Танковăй подразделенин командирĕ Денисенко юлташ питĕ ăста кĕрешнĕ. Вăл хăйĕн танкĕпе тăшманăн укрепленине татса кĕнĕ, çапла вăл нимĕçсен землянкисем патне пынă та, гранатăсем пăрахса, нимĕçсен 7 землянкинчи салтакĕсемпе офицерĕсене 60 çынна пĕтерсе тăкнă.

И. ГРИБОВ.

Тĕлĕнмелле çапăçу

Кĕçĕн сержант Матвей Теняев çивĕч те опытлă куçĕсемпе хăйĕн кабинине пăхса тухрĕ, ĕçе хăнăхнă аллисемпе радиостанцине тĕрĕслерĕ, пулемечĕпе темиçе ăстрăм çÿлелле персе пăхрĕ. Сывлăшра пенĕ сасăсем уççăн янăраса илчĕç. Пурте йĕркеллĕ м[illegible].

— Вĕçме хатĕр! — тесе пĕлтерчĕ вăл.

Летчик Мартынов моторсене ĕçлетерме пуçларĕ. Винтсем янăраса çаврăнма тытăнчĕç. Инçете вĕçекен бомбардировщик сывлăшалла хăпарчĕ. Кунта ăна кĕтсе аэродром тĕлĕнче ытти машинăсем çаврăнса вĕçсе çÿреççĕ.

Хĕрĕх минутăранах звено хăйне кăтартнă вырăна вĕçсе çитрĕ. Сайра пĕлĕтсем витĕр вăл уççăнах курăнса выртать. Аялта, М. хули патнелле, çул тăрăх пехотăна лартнă тăшман автомашинисем пыраççĕ. Вĕсем çине летчиксем самантра бомбăсем пăрахрĕç, тăшман автомашинисем çĕмĕрĕлсе çул çинчи пылчăкпа хутшăнса кайрĕç.

Мартыновăн бомбардировщикĕ айăккалла пăрăнсанах ун çинелле фашистсен зенитчикĕсем пеме тытăнчĕç. Часах штурман Лебедев сывлăшри тăшмана курчĕ те экипажа:

— Тăшман истребителĕсем! — тесе асăрхаттарчĕ. Теняев каялла çаврăнса пăхрĕ. Стабилизатор хыçĕнче икĕ енчен те нимĕçсен пĕр моторлă истребителĕсем вĕçсе пыраççĕ. Стрелок-радист самантрах вĕсем çинелле пеме тытăнчĕ.

Бомбардировщик аялтан вĕçме пуçларĕ, анчах фашист çăханĕсем унтан пĕрре те юласшăн мар, вĕсенчен пĕри харсăрланса бомбардировщикпа юнашар тенĕ пекех, пĕр вăтăр метртра кăна, вĕçсе пырать. Фашистсен летчикĕпе унăн хура хĕреслĕ тата свастикăллă сарă машинине кĕçĕн сержант лайăххах курса пырать. Тăшмана лайăх тĕллесе, вăл ун çинелле пулеметпа темиçе ăстрăм шатăртаттарса илчĕ. Фашист ларса пыракан вырăн умĕнче çулăм ялкăшса тухрĕ, лайăх тĕллесе пенĕ пуля бензин бакнех пырса лекнĕ пулмалла. Вăл тăшман истребителĕн сулахай çуначĕ уйăрăлса кайнине, унтан машина тепĕр еннелле çаврăнса çĕрелле вăркăннине те лайăххах сăнаса юлчĕ.

Нимĕçсен пĕр истребительне çĕмĕрнĕ хыççăн комсомолец Теняев тепринпе çапăçма пуçларĕ. Вăл лайăх тĕллесе пенĕ пульăсем çакна та парăнтарчĕç. Персе амантнă тăшман «Мессершмичĕ» çÿлелле хăпарма хăтланса пăхрĕ, анчах вăл ниепле те хăпарма пултараймарĕ, кайран вара çĕре ÿксе куçран çухалчĕ.

Анчах фашистсен истребителĕсем çапах та бомбардировщика амантрĕç. Вăл сылтăм аякĕ çинче çеç вĕçет.

— Педаль çине хытăрах пус! Ручкăна вырăнне лартса вĕçме пулăш! — тесе кăшкăрчĕ летчик хăйĕн штурманне.

Пĕтĕм вăй-хала пухса, вĕсем машинăна аран-аран тытса пычĕç. Вĕсем питех те аялтан, йывăççен тăррисене кăшт перĕнмесĕр кăна вĕçсе пычĕç.

— Эпĕ аманнă, — терĕ хăйĕн юлташĕсене харсăр стрелок Котельников тăшмансене çĕнтернĕ хыççăн. Унăн аманнă аллинчен çаплах юн юхма чарăнман.

Вĕсем чиперех пĕр анкартине анса ларчĕç. Çак анкарти фронт линийĕнчен пурĕ те ултă километрта кăна пулнă мĕн. Машина патне самантрах боецсем чупса пычĕç. Вĕсем бомбардировщик тăшманăн икĕ истребительне хирĕç сывлăшра мĕнле çапăçнине сăнаса тăнă пулнă. Халĕ вĕсем харсăр летчиксене хăйсенчен вăйлăрах пулнă тăшмана çĕнтернишĕн саванса саламлаççĕ.

Бомбардировщикăн паттăр экипажне вĕсем тăшманăн иккĕмĕш истребителĕ те çĕмĕрĕлсе çĕре персе анни çинчен пĕлтерчĕç.

Политрук А. ДЕВЯТКИН.
(«Комсомольская Правда» хаçатран).
ХĔВЕЛАНĂÇ ЕНĔ.

Тред-юнион отделенийĕсен делегацийĕсен конференцийĕ

ЛОНДОН, январĕн 4-мĕш. (ТАСС). Ĕнер тред-юнион отделенийĕсен тата Ливерпуль районĕнчи профсоюзсен делегацийĕсен конференцийĕ пулса иртнĕ. Конференцире 500 çын пулнă. Конференци пухăннă зала Совет Союзĕпе Англи флагĕсемпе илемлетнĕ. Конференци ларăвĕнче тред-юнионсен Конгресĕн секретарĕ Ситрин тата Совет профсоюзĕсен делегацийĕн членĕсем — Шверник, Якубов тата Маслов юлташсем пулнă. Профсоюз ялавĕсене çĕкленĕ Англи рабочийĕсем совет делегацине хаваслăн саламланă, делегаци зала кĕрсен, ăна темиçе минута хушши тăвăллăн алă çупса хапăлланă.

Профсовет председателĕ Портер Англипе Совет профсоюзĕсем октябрĕн варринче Мускавра тунă килĕшĕвĕн текстне вуласа панă. Унтан Ситрин Англипе Совет профсоюзĕсен комитетне тунине ырлакан резолюци йышăнма сĕннĕ тата производствăна ÿстерме кирли çинчен каланă.

Совет делегацийĕн членĕ Масалов юлташ хăй сăмахĕнче совет авиаци промышленноçĕнчи рабочисен героизмĕ çинчен каласа панă, çав сăмахрах вăл: хальхи вăхăтра Германи çарĕсене амантни вăл гитлерла варварсене пĕтерессин пуçламĕш кăна пулать-ха, тенĕ. Хăвăртрах çĕнтерес тесен, Совет Союзĕпе Англи завочĕсенче тупăсем, самолетсем, танксем туса кăларассине ÿстермелле, тенĕ. Масалов юлташăн çак сăмахĕсене конференци вăйлăн алă çупса кĕтсе илнĕ.

Юлашкинчен сăмахпа Шверник юлташ тухнă, конференци ăна вăйлă овацийĕпе кĕтсе илнĕ. Хăй сăмахĕнче вăл малтан Гитлерăн совет халăхĕсене чуралантарас планĕ путланса ларни çинчен тата Англипе Совет профсоюзĕсем Мускав тавра тупă сассисем кĕрлесе тăнă хушăра тунă килĕшÿ вăрçă хыççăн та пăрахăçа тухма кирлĕ марри çинчен каланă.

Шверник юлташ совет рабочийĕсен социализмлă ăмăртăвĕн çитĕнĕвĕсем çинчен, совет хĕрарăмĕсем йывăр профессисене вĕренсе çитес тĕлĕшпе тунă чаплă çитĕнÿсем çинчен тата совет предприятийĕсен ĕçĕсем çинчен каланисене конференци делегачĕсем пысăк тимлĕхпе итленĕ.

Шверник юлташ: «Гитлер чури пулса тăричченхальхи вăхăтра йывăрлăхсене тÿссе ирттерни тата вăрçă вăхăтĕнче производствăна ÿстерсе тăшмана çĕнтерни лайăхрах» тесе каланине конференци шавлăн алă çупса ырланă. Сĕннĕ резолюцие пĕтĕм конференци пĕр шухăш-кăмăллă пулса йышăннă.

ХĔРЛĔ ÇАР ÇĔНТЕРĔВĔСЕМ ÇИНЧЕН АМЕРИКĂРА МĔН ÇЫРАÇÇĔ

НЬЮ-ЙОРК, январĕн 4-мĕш. (ТАСС). «Нью-Йорк таймс» хаçатăн обозревателĕ Болдуин çапла çырать: «Советсен нимрен хăраман воинĕсем Керчьпе Феодосия хулисене туртса илчĕç. Ку вăл пысăк çĕнтерÿ туни пулать: противник йышăнса тăракан çыран хĕррине десант антарасси вăл вăрçă ĕçĕн питĕ те йывăр ыйтăвĕ пулса тăрать». Калуга хулине туртса илнĕ вырăс çарĕсен çĕнĕрен тунă пысăк çĕнтерĕвĕсем çинчен пĕлтернисем, — тесе çырать «Нью-Йорк геральд трибюн», — нимĕçсемпе вĕсен хÿрешкисем хăрушă положенире тăнине уççăн кăтартса параççĕ. Нацистсем «малтан палăртса хунă тăрăх чакни» тесе хăйсем суйса каланине ĕнтĕ урăх йышăнмаççĕ. Совет войскисем тапăнса пынине нимĕçсем питĕ хаяррăн хирĕç тăраççĕ курăнать, совет войскисем вĕсене калама çук пысăк çухатусем тÿстереççĕ. Тĕнчери пĕрлĕхлĕ вăрçă фрончĕн пĕр-пĕр участокĕнче çĕнтерни е поражени тÿсни часах ытти участоксенче те сисĕнет. Вырăссен ăнăçăвĕсем Лăпкă океан çинчи лару-тăрăва хаклас тĕлĕшпе лăплănса-ларма хушмаççĕ, вĕсем Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен хăйсене тивĕçлĕ ĕçсене тума кирлине кăтартса тăраççĕ.

Ассошиэйтед пресс агентствин обозревателĕ Стимсон çапла калать: Керчь хулине илни çĕнĕ генералиссимуса Гитлера çĕнĕрен питĕ вăйлăн çапни пулать. Стимсон шухăшĕпе, Хĕрлĕ Çарăн çак çĕнтерĕвĕ вăл Гитлерăн Кавказа çĕмĕрсе кĕрес планне арпаштарса ячĕ тата вăл Англин Çывăх Хĕвелтухăçĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен позицийĕсене çирĕплетсе хучĕ.

Турци хаçат-журналĕсем Германи командованийĕн йăнăшĕсем çинчен

СТАМБУЛ, январĕн 6-мĕш. (ТАСС). «1941 çул пуçланас умĕн, — тесе çырать Джахид Ялчин «Ени сабах» ятлă хаçатра, — Германири радио пысăк сăвăнăçпа çапла каласа пĕлтерчĕ: çак çул пуçăнех çĕнтерес çул пулса тăрать, терĕ вăл. Гитлер нимĕçсене — çак çул эпир çĕнтерÿ тăватпăрах ĕнтĕ, тесе темиçе хут та ĕнентерсе каланă. Хăйĕн нумаях пулмасть тухса каланă сăмахĕнче вăл çапла пĕлтерчĕ: Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтĕнче юлашки наступлени пуçланчĕ, вырăссем ĕнтĕ хăйсен юлашки сехетне пурăнса ирттереççĕ, терĕ. Анчах та çак юлашки сехет вăл нимĕçсен наступленийĕн юлашки сехечĕ пулса тăчĕ. Нимĕçсем калаççĕ: эпир хамăр ирĕкпе чакса пыратпăр, теççĕ. Анчах та вĕсем хăйсемех питĕ паха тесе шутлакан хуласемпе позицисене çухатса пыраççĕ. Ливири вăрçă та нимĕçсен чĕрине касать.

Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтĕнче çак çĕнĕ çул пуçланас умĕн пулса тăнă обстановка çинчен каласа, Джехерия Сертель «Тан» хаçатра çапла çырать: «Вăрçă пуçланнăранпа ултă уйăх иртсен, нимĕçсен малалла наступлени туса пыма пăрахмалла пулчĕ çеç мар, вĕсен тата каялла чакса пымалла пулса тăчĕ. Нимĕçсен каялла чакса пыракан çарĕсене совет войскисем пĕр чарăнмасăр пырапыра çапаççĕ, нимĕçсем ниепле те çирĕп оборона линийĕ туса хураймаççĕ. Хĕрлĕ Çар пуçарулăха хăйĕн аллине çавăрса илет».

«Тасвири эфкяр» хаçат хăйĕн умстатьинче çапла çырать: «Совет Союзĕпе Германи фронтĕнче нимĕçсем пысăк йывăрлăхсем тÿснине куратпăр эпир. Вырăссен Крымри ăнăçăвĕ çакна кăтартса парать: вĕсен типçĕр çинчипе тинĕс çинчи вăйĕсем, хĕллехи условисене пăхмасăрах, питĕ аслă ĕçсем тăваççĕ».

Фашистсен хаçачĕ хурлăхлă нăйкăшни

Фашистсен «Берлинер берзенцейтунг» хаçачĕн çар корреспонденчĕ Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтĕнчи нимĕç çарĕн пысăк йывăрлăхĕсем пирки хурлăхлăн нăйкăшать. Çав корреспондента уйрăмăнах Хĕрлĕ Çар нимĕç салтакĕсене, ăшă çуртсенче ларма памасăр, çара уя хăваласа кăларни тарăхтарать. «Йĕри-тавра ниçта пĕр çурт та çук, — тесе çырать корреспондент, — кунта витĕр касакан совет çилĕнчен пĕртен пĕр кĕлте çеç хÿтĕлеме пултарать». Çавăнпа пĕрлех статья авторĕ Германи салтакĕсен тумтирĕ хĕллехи условисене пĕртте юрăхлă марри çинчен çырать. «Нимĕç салтакĕсен тумтирĕ çÿхе. Вĕсен тумтирĕпе этем хĕллехи сивĕре хăйне çарамас пекех туять. Сивĕрен мĕнле çăлăнмалла, ун çинчен никам та пĕлмест. Çакăн пек çĕрте харпăрхăй пит-куçне çăм шарăхпа хупласа выртакан та питех те телейлĕ», тет вăл. Статья авторне хĕллехи вăрăм уйăхсем те хытах хăратаççĕ: «Çакăнти çеçенхирте хĕлĕн шартлама сивви татах та темиçе уйăх тăмалла халĕ» тет вăл пăшăрханса.

(ТАСС).

Итали халăхĕ выçăхса пурăнни

НЬЮ-ЙОРК, январĕн 4-мĕш. (ТАСС). Оверсис-Ньюс агентствин Цюрихри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Италирен Швейцарие çитнĕ врачсем çапла каласа панă: Италире продуктсем памалли норма чи пĕчĕк потребноçсене те çырлахтарма пултараймасть, ку шута нормăсăр паракан продуктсем те кĕреççĕ. Çитменнине, продуктсем ытла та хакланса кайнă. Çавăн пирки халăхăн шалу сахал илекен сийĕ карточкăсем тăрăх тивекен продуктсене те илеймесĕр тăрать. Врачсем çапла каланă: нумай хуласенче кунсерен выçăпа аптраса халран кайнă пирки урам тăрăх утса пынă чухнех ÿкекен 20—30 хĕрарăмран кая мар çĕклесе тăратаççĕ.

Лăпкă океан çинчи вăрçă

(Январĕн 3-мĕшпе 4-мĕшĕнчи телеграммăсене пăхса тухни)

Лусон утравĕ çинче Америкăпа Филиппин войскисем Манилăран çурçĕр-хĕвелтухăçĕнчи çĕнĕ позицисенче çирĕпленсе тăнă. Вĕсем Коррегидор укрепленине, çавăн пекех тата Манила бухти районĕнчи укрепленисене те хальхи вăхăтра хăйсен аллинчех тытса тăраççĕ, çакăн пирки японецсем кунти гаваньпе усă курма пултараймаççĕ. Япони войскисем Америка оборонин çĕнĕ позицине те татма тăрăшаççĕ, анчах та Америка çарĕсем вĕсене хирĕç вăйлăн тăраççĕ. Лусон утравĕн çурçĕр тата кăнтăр-хĕвелтухăç фрончĕсенче японецсем тунă атакăсене пурне те каялла сире-сире пăрахнă. Япони авиацийĕ Коррегидор тата Манила бухти çине татти-сыпписĕр пыра-пыра тапăнать. Ĕнер японецсен 60 бомбардировщикĕ çак пунктсем çине 5 сехет хушши бомбăсем пăрахса тăнă. Бомбăсем пăрахнипе пулнă сиен пысăках мар: 13 çын вилнĕ, 35 аманнă. Японецсен 3 самолетне персе ÿкернĕ.

Кунсăр пуçне Япони авиацийĕ тата Америка войскисем тăракан çĕнĕ позицисем çине вăйлăн тапăннă. Филиппинăн ытти çĕрти фрончĕсенче паллă ĕçсемех пулман. Америка карапĕсем Лăпкă океан çинче Англи флочĕпе тата Голланди Индийĕн флочĕпе пĕрле килĕштерсе ĕçленĕ.

Малайăра çапăçусем çаплах пыраççĕ. Керак участокĕнче Англи войскисен пăртак каялла чакма лекнĕ. Англичансем контратака туса японецсене пысăк çухату кÿнĕ. Японецсем Керак юханшывĕнчен хĕвелтухăçнелле çĕнĕрен десант антарма хăтланни ăнăçсăр пулнă. (ТАСС).

Японипе Китай хушшинчи вăрçă

Чанша хули çине наступлени туса пыракан Япони войскисене китаецсем хыттăн хирĕç тăрса кĕтсе илнĕ. Китай войскисем Чанша хулине японецсем тапăннинчен пĕлтĕртенпех сыхласа тăраççĕ. Чаншашăн пыракан çапăçусенче вĕсем Япони çарĕсене пысăк çухатусем кÿнĕ.

Японецсем Хунань провинцин çурçĕр пайне вăйлă çар чаçĕсем пухса тăратнă пулнă, çак вăйсемпе декабрĕн 20-мĕш числисенче вĕсем кăнтăр еннелле наступлени тума пуçланă. Китай çарĕсен командованийĕ пĕлтернĕ тăрăх, японецсен кунта наступлени тăвакан войскисен шучĕ 100 пин çынна çитет. Пулса иртнĕ çапăçусене 6 дивизи тата 2 бригада хутшăннă. Мило юханшывĕ урлă каçса, японецсем хăвăрт Чанша хули патнелле каçса пынă. Чи хаяр çапăçусем январĕн 3-мĕшпе 4-мĕшĕнче пулса иртнĕ. Японецсем хулана виçĕ енчен çавăрса илме пултарнă. Анчах та, Китай войскисем вăйлă контратакăсем тунипе тата вĕсем Япони войскисен сулахай флангĕпе тылĕ çине пырса тапăннипе, японецсен фронт енчен хĕсse пырасси вăйсăрланнă.

Цзянси провинцинче Китай войскисем Гаоань хулине йышăнса илнĕ. Ку хула Наньчанран 60 километр кăнтăр-хĕвелтухăç еннелле ларать. Японецсем Наньчан хули патнелле чакнă. Чжецзян провинцинче Китай войскисем Унин хулине тытса илнĕ. **(ТАСС, январĕн 5 мĕш).**

Германи йышăнса илнĕ çĕршывсенче кĕртыррине сахал акса хăварнă

НЬЮ-ЙОРК, январĕн 5-мĕш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентствин Вашингтонри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен çĕрĕç министерстви нимĕçсем иртнĕ кĕркунне кĕртырри акмалли çĕр лаптăкне нимĕн чухлĕ те ÿстерме пултарайманни çинчен кăтартса панă. Ку тĕлĕшпе вĕсене — пĕр енчен, кĕрхи çанталăк япăх тăни, тепĕр енчен тата, ĕçлекен вăй çитменни кансĕрленĕ. Европăра Германи йышăнса илнĕ пĕтĕм çĕршывсенче иртнĕ çулта кĕртырри акса хăварнă çĕр лаптăкĕ 1940 çулти кĕркунне акнинчен каярах шутланма пултарать. 1940 çулти кĕркунне акнă çĕр лаптăкĕ ахаль те ытти çултисенчен сахалрах пулнă. Кĕркунне çителĕклĕ акайманнине çитес çуракинче ытларах акса тултармасан, вара Германи аллинчи çĕршывсен виççĕмĕш çул харăсах тулă çитменнипе аптăрамалла пулать. Вĕсенче, тырпул йĕркеллĕ туса илнĕ çулсенче 1.700 миллион бушель тулă илме пултарнă пулсан, 1941 çулта 1320 миллион бушель кăна туса илнĕ. Италире те, ĕçлекен вăй çитмен пирки, иртнĕ кĕракинче тулă акмалли çĕр лаптăкне ÿстерме пултарайман. Унта тырпул йĕркеллĕ туса илнĕ çулсенче те ĕçмелли çитменни вăйлăн палăрать.

Хĕрлĕ Çар валли аш-какай

СОВЕТСКОЕ. Пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çар нимĕç фашисчĕсен вăрă-хурахла çарне вăйлăн çĕмĕрсе хĕвеланăç еннелле хăвалать. Пирĕн геройла воинсен вăрçă фрончĕсенчи пысăк çĕнтерĕвĕсем ĕççыннисене савăнтараççĕ. Колхозниксем тăшмана пĕтерсе тăкма ĕçпе пулăшаççĕ.

Туçи ялсоветĕнчи «Цивильстрой» колхоз чĕнĕвне пирĕн районри колхозниксем ырлаççĕ, вĕсем Хĕрлĕ Çар валли аш-какай резервĕсем тума тытăнчĕç. Уйкас-Асламасри «Искра» колхоз членĕсем Хĕрлĕ Çар валли выльăхсем самăртаççĕ. Колхоз председателĕ З. Николаев юлташ пĕр сурăх, счетовод Б. Ильин — пĕр сурăх, колхозник С. Николаев пĕр хур, В. Николаев 3 чăх, Е. Капитонова 2 кăвакал тата ытти колхозн[illegible]сем те выльăхсем самăртма пулчĕç.

Ф. НИКИТИН.

* * *

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Çĕрпÿ районĕнчи «Цивильстрой» колхоз членĕсен чĕнĕвне районри колхозсем пысăк çĕкленÿпе кĕтсе илчĕç. Ну[illegible] колхозсенче вăл чĕнĕве колхозниксем хăйсен пухăвĕсенче сÿтсе яваççĕ.

Янчелла ялсоветĕнчи «Новая [illegible]ла», «Победа», «Процесс» колхоз членĕсем Хĕрлĕ Çар валли пĕрер [illegible]льăх самăртса пама йышăннă. М[illegible] Шетмĕ ялсоветĕнчи «Красный Пор[illegible]нер» колхоз членĕсем М. Петров[illegible] П. Петров юлташсем пĕрер така [illegible]мăртаççĕ.

ИВ. Х[illegible]

* * *

КУКЕÇ. Шупашкар районĕнчи «Кра[illegible]ный флот» колхоз членĕсем «Цивиль[illegible]строй» колхоз чĕнĕвне сÿтсе явн[illegible] хыççăн Хĕрлĕ Çар валли выльăхсе[illegible] самăртма пулчĕç. Колхозниксем Е. Ф[illegible]липповпа И. Григорьев пĕрер сыс[illegible] самăртаççĕ. Молотов ячĕпе тăрак[illegible] колхоз членĕсем Хĕрлĕ Çар вал[illegible] кашниех пĕрер выльăх ÿстерсе [illegible]мартма пулчĕç.

А. ТИМОФЕЕВ.

Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем

ШĂХАСАН. Районри ĕççыннисем хушшинче Хĕрлĕ Çар боецĕсене ăшă тумтирсемпе япаласем парса пулăшас ĕç сарăлсах пырать. Ку ĕç уйрăмах Анат Вăрманъял, Ухман, Çĕнĕ Мами, Ямаш ялсовечĕсенче ăнăçлăн пулса пырать. Анат Вăрманъял ялсоветне кĕрекен «Чуваш. ЦИК» колхозри колхозниксем Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли [illegible] тир, 13 çĕлĕк, 20 мăшăр тăла, 7 мă[illegible] çăматă, 12 килограмм çăм, 14 алшă[illegible] 12 мăшăр алшишсемпе чăлхасем т. ыт. те панă. Ухман ялсоветне кĕрекен колхозсенчи колхозниксем 114 тир, 88 мăшăр тăла, 52 алшăлли, 17 çĕлĕк, 28 мăшăр алшиш, 24 мăшăр носкисемпе чăлхасем, 4 мăшăр çăматă, 34 килограмм çăм, Çĕнĕ Мами ялсоветне кĕрекен Молотов ячĕпе тăракан колхоз членĕсем 34 тир, 19 мăшăр тăла, 110 килограмм çăм панă. Çавăн пекех Ямашри «Ударник» колхозри колхозниксем те 65 тир, 37 килограмм çăм, 31 алшăлли, 4 мăшăр кĕпе-йĕм, 16 мăшăр алшишсемпе чăлхасем, 19 мăшăр тăла тата ытти те парса пулăшнă.

Ăшă япаласем пухас ĕç Шăхасан[illegible] вăтам шкулта вĕренекенсемпе учи[illegible]сем хушшинче те авăн пулса пы[illegible]. Унта Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли [illegible] мăшăр перчатка, 20 тир, 12 çĕлĕк, [illegible] мăшăр носки, 37 алшăлли, 21 кило[illegible] çăм, 2 мăшăр çăматă панă.

Çавăн пекех Хĕрлĕ Çар боецĕсем [illegible]ли ăшă япаласемпе тумтирсем [illegible] ĕç Шуркассинчи, Ямашри вăтам [illegible]сенче тата Шăхасан, Шĕкĕр ялсо[illegible]сенче те ăнăçлăн пырать.

Ку ĕçĕн ăнăçлăхĕ вырăнти [illegible] колхозниксем хушшинче массăллăлантарулла ĕçе кирлĕ пек туса пын[illegible]чен килет. Агитаторсемпе активистсен колхозниксене эпир панă кашни ăшă япалах боецсен пурнăç условийĕсене лайăхлатма пулăшни çинчен ăнлантарса памалла, Хĕрлĕ Çар боецĕсене ăшă тумтирсемпе япаласем ытларах та ытларах парса пулăшма мобилизацилемелле.

В. ЯКОВЛЕВ.

„Комсомол Чувашии“ бронепоезда тума укçа-тенкĕ пухаççĕ

КАНАШ. Районри ĕççыннисем «Комсомол Чувашии» бронепоезда тума çаплах укçа пухаççĕ. Доронин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем бронепоезда тума 1.500 тенкĕ, М. Горький ячĕпе тăракан колхоз—1.874 тенкĕ, Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз—800 тенкĕ, «Ударник» колхоз членĕсем 500 тенкĕ панă.

Бронепоезд тума укçа пухас тĕлĕшпе вагонсем юсакан завод малта тăрать. Январĕн 1-мĕш тĕлне кунта пурĕ 9 пи[illegible] тенкĕ пухнă.

ВЛКСМ райкомĕ пĕлтернĕ тăрăх, январĕн 1-мĕш тĕлне «Комсомол Чувашии» бронепоезда тума районĕпе 64.18[illegible] тенкĕ укçа пухнă.

Т. ИВАНОВ.

Красноармеецсем çĕнĕ чугунçул кĕперĕ тунă

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ. Çапăçусен пĕр районĕнче чугунçул çинчи пысăк кĕпере взрыв туса сирпĕнтернĕ. Пирĕн чаçсем нимĕçсене çак районран хăваласа ярсан, фронт командованийĕ Н-ски чугунçул чаçне çĕнĕ кĕпер тума приказ панă. Боецсене пулăшмашкăн Çул-йĕр Халăх Комиссариачĕн юсакан бригадисене хупса панă.

Умра питĕ йывăр ĕç тăнă. Виçĕ километр тăршшĕ чугунçул хывса, ăна балластпа тултармалла, шпалсемпе рельссем хумалла пулнă, чи йывăртараххи — икĕ кĕпер тăвасси пулнă.

Декабрĕн 18-мĕшĕнче тĕпчев ĕçĕсене тума пуçланă. Участок комиссарĕ Беляев юлташ, хăйĕн специальноçĕпе инженер-мостовик, çĕнĕ строительствăн районне пуринчен маларах тĕпчесе тухнă та хăйĕн шухăшне каласа панă. Вара çийĕнчех расчетсемпе проектсем туса хатĕрленĕ.

Тепĕр кунне çĕршер çын ĕçе тытăннă. Электростанципе компрессорнăй станци ĕçлеме пуçланă, Пĕрене-хăмасемпе тимĕр каштасене тракторсемпе турттарса пынă. Капитан Раков балласт илмелли кĕтесе лартнă икĕ карьера çĕнĕрен ĕçе ярас тĕлĕшпе ĕçленĕ. Çĕнĕ чугунçул патне хăйăрпа галькăна мотовозсемпе турттарса пынă.

Боец-железнодорожниксем питĕ пысăк ĕç тухăçлăхĕпе ĕçленĕ. Старший политрук Душин плана мĕнле тултарса пынине, малта пыракан бригадăсемпе стахановецсене кашни кунах пысăк плакатсем çинче сăнласа кăтартса панă. Çĕрĕн-кунĕн ĕçленĕ. Боецсем 16—18-шар сехет ĕçленĕ хыççăн та канма кайма килĕшмен.

Старший сержант Тришинăн бригади пуринчен ответлăрах задани илнĕ. Ку бригадăн юханшыв тĕпне ряжсем хурса çирĕплетмелле пулнă. Боецсем пăрлă шывра ĕçленĕ. Сивĕ пулин те, задание тултариччен боецсем участокран кайман.

Пидунов лейтенантăн взвочĕ взрыв туса тăпрана сирпĕтсе кăларас тата котловансем чавас ĕçе ăнăçлăн вĕçленĕ. Çар железнодорожникĕсен мĕншур коллективĕ, вăя шеллемесĕр, вăхăта шута илмесĕр, кашни хăйсен участокĕсене тăратса ĕçленĕ. Леонов юлташăн подразделенийĕнчи красноармеецсем юлашки виçĕ кун хушшинче пĕр канмасăр ĕçленĕ. Пурин те пĕр ĕмĕт — çар эшелонĕсене хăвăртрах фронта ирттерсе ярас ĕмĕт пулнă.

Строительство начальникĕ, опытлă командир-инженер Дорбин юлташ боецсемпе пĕрлех кунĕн-çĕрĕн строительствăра пулнă, подразделенисене палăртнă плана пурнăçа кĕртме пулăшса пынă.

Çак кунсенче çĕнĕ чугунçул кĕперĕ урлă чи малтанхи çар составĕ каçса кайнă. Ун хыççăн татах та темиçе состав иртнĕ.

Эрне хушшинче пирĕн боецсем рамăллă тĕревсем çинче 203 метр тата 43 метр тăршшĕ икĕ кĕпер тунă, çак кĕперсем патне пымалли чугунçула хывнă. Çак вăхăтра 7.000 кубометр тăпра чавса кăларса чугунçул линийĕ çине вырнаçтарса хунă, 200 тонна тĕрлĕрен тимĕр конструкцисене вырнаçтарса хунă, 900 кубометр вăрман вырнаçтарнă т. ыт. ĕçсене те тунă.

— Çĕнĕ чугунçул кĕперĕсем, — тенĕ рабочисенчен пĕри, — Хĕрлĕ Çар валли çĕнĕ çул ячĕпе тунă парне пулса тăрать.

(«Красная звезда» хаçатран).

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редактор заместителĕн — 3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, ялхуçалăхĕпе промышленность пайĕсен — 0—83, çырусемпе рабсельхорсен пайĕн — 2—30, дежурнăйăн — 6—23, «Ленин çулĕпе» журналăн — 0—85, издательство конторин — 0—23.

НТ 7 Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии при СНК ЧАССР. Заказ № 2. Ф 6. 53 _ 84 п. п.